Георгий Ефимов

# Поэт, çулçӳревçĕ[1]

1964 çул. Сентябрь уйăхĕ. Çанталăкĕ калама çук лайăх тăрать. Кун пек чухне çул çӳреме аван. Хĕвелĕ те ытлашши пĕçертмест, çумăрĕ те çуса аптăратмасть.

Поезд Берлиналлаваскать. Хальхинче пирĕн йышра писательсем кăна. Мускавран – Н. Винников, М. Ефетов, Л. Воронкова, Т. Леонтьева, Ригăран - Юлий Ванаг, Шупашкартан – П. Хусанкай тата эпĕ. Пĕр-пĕринпе тахçанах паллашнă ĕнтĕ. Вагонра çынсем хăвăрт туслашса пĕлĕшленеççĕ.

Çыракан çынсем, паллах, литература пирки ытларах калаçаççĕ. Кам мĕн çырать, мĕн çырса пĕтернĕ, мĕн çырма палăртса хунă – нимĕн те пытармаççĕ. Н. Винников, авă, комеди çырать иккен. Кайран çав комедие Шупашкарти музыкăпа драма театрĕнче те лартса пачĕç. Вăл – «Девушка с голубыми глазами». Т. Леонтьева К. Марке çинчен калавсем çырма ĕмĕтленет.

– Пирĕн те мĕн те пулин çуралĕ-ха, – шӳтлеме пăхать П. Хусанкай, вĕсем савăнăçлăн калаçнине кура.

– Çул вăл чуна уçать, тавракурăма анлăлатать, – çавăнтах калаçăва хутшăнать Л. Воронкова.

Берлин хулине эпир тăр кăнтăрла çитрĕмĕр. Хула таврашĕ ешĕл, сад пахчи пек. Çав сад пахчи варринчен çĕнĕ çуртсем шăта-шăта тухнă пек туйăнаççĕ. Вĕсем сенкер тӳпенелле, хĕвел патнелле кармашаççĕ.

Вокзалран пирĕн йыша «Беролина» гостиницăна илсе кайрĕç. Гостиницине тин çеç туса лартнă. Çĕнĕ. «Беролина» «упа çури» тенине пĕлтерет. Елĕк-авал кунта сĕм вăрман пулнă имĕш. Ахальтен мар Берлин гербĕ çинче – упа.

Çитнĕ кун пире хамăр тĕллĕн çӳреме ирĕк пачĕç. Эпир гостиница çывăхĕнче курса çӳрерĕмĕр. Метрона та анса пăхрăмăр. Метро сулхăнĕ пите çапсан, темшĕн курни-илтни умма тухса тăчĕ. Тен, çак тĕлте те çынсем шывпа чыхăнса вилнĕ. Çынçиен Гитлер метрона шыв янă вĕт. Халĕ лăпкă. Çынсем хăйсен ĕçĕпе васкаççĕ. Вĕсен săн-пичĕсем лăпкă, шиклĕх çук. Урамра – хĕвел, тӳпе – таса та сенкер.

Тепĕр кунне пире Трептов-парка илсе кайрĕç. Унта Çĕнтерӳçĕ-салтак палăкĕ умне, хамăр йыш ячĕпе. П. Хусанкайпа Н. Винников чечек кăшăлĕ хучĕç.

---

[1] *Юлашки. Пуçламăшĕ 1 номерте.*

Бранденбург хапхи патне те ҫитрӗмӗр. Ун ҫывӑхӗнчех пӗр ишӗлчӗк ҫурт ларать. Вӑл – вӑрҫӑ суранӗ, юлашки. Ӑна сиплесе ӗлкӗреймен-ха. Рейхстаг та, хӑрӑмпа сӑрнӑ пек, хура тӗспе сиввӗн курӑнса ларать.

Ак ҫурт ларать.
Вӑл ҫуннӑ, хуп-хура.
Стени ала пек...
Ах, пӑхма хӑрушӑ.
Ирӗксӗрех умна тухса тӑрать
Шур пуҫ шӑмми... куҫ шӑтӑкӗ пуш-пушӑ.
Аттемӗрсем, пиччемӗрсем кунта
Ҫут тӗнчене хӑрушлӑхран хӑтарнӑ.
Ҫӗнтерӳҫсем пулсассӑн та, чунтан
Нимӗҫ ӗҫченӗпе курка тултарнӑ.

Ҫапла йӗркесем ҫуралчӗҫ манӑн вӑрҫӑ суранӗсене курсассӑн. Ҫӗнтерӳҫӗ-салтака ӗмӗр-ӗмӗрех пуҫ таймалла. Вӑл пӗтӗм тӗнчене фашизм чуралӑхӗнчен хӑтарса хӑварнӑ. Темиҫе ӗмӗр иртсен те, пархатарлӑ этемлӗх тав тӑвӗ ӑна.

Кунта эпир музейсемпе библиотекӑсене, кӗнеке магазинӗсене кӗре-кӗре куртӑмӑр. Пире пур ҫӗрте те хапӑл турӗҫ.

Веймар хули. Веймар тесессӗн, камӑн чӗри хыпӑнса ӳкмӗ! Шкултах эпир Гетепе Шиллер туслӑхӗ ҫинчен вуланӑ, ҫав аслӑ писательсен произведенийӗсемпе паллашнӑ.

Халӗ эпир – ҫав икӗ чаплӑ ҫын ячӗпе ҫыхӑннӑ хулара. Гетепе Шиллер палӑкӗ. Вӗсем юнашер тӑраҫҫӗ. Веймерта вӗсем театр йӗркеленӗ.

Тен, эпир тӑракан чул ҫине вӗсен урисем пусса иртнӗ! Тен, ҫак йывӑҫ сулхӑнӗнче тарӑн шухӑша путса ларнӑ! Пулӗ те.

Гете ҫуртне 1709 ҫулта туса лартнӑ. Ҫак ҫуртра Гете 1782 ҫултан пуҫласа 1789 ҫулччен, унтан 1792 ҫултан тытӑнса мӗн ҫӗре кӗриччен, 1832 ҫулччен, пурӑннӑ. Вӑл вилсен, унӑн виҫӗ мӑнукӗпе Оттилия кинӗ Гете еткерлӗхне уп-раса пураннӑ. 1885 ҫулта, юлашки мӑнукӗ вилсен (унӑн ача-пӑча таврашӗ пулман), Геге еткерлӗхӗ, халалласа хӑварнӑ тӑрӑх, патшалӑх аллине  куҫнӑ.

1945 ҫулхи февралӗн 9-мӗшӗнче Гете ҫурчӗ ҫине бомбӑсем ӳкнӗ. Ҫурта нумай сиен кӳнӗ. Совет салтакӗсем ӑна ҫӑлса хӑварнӑ, вӗсемех юсанӑ, ӗлӗкхи сӑн кӗртнӗ. 1949 ҫултан вара Гете ҫурчӗ, малтанхи пекех, хӑнасене йышӑнма тапратать. Килҫуртри япаласене складран илсе тухса ӗлӗкхи вырӑна лартаҫҫӗ. Ҫак ҫуртра унӑн «Вильгельм Мейстер», «Избирательное сродство» романӗсен,

«Поэзия и правда», «Учение о цветах», «Западно-Восточный диван» сăвăсен пуххипе вилĕмсĕр «Фаустăн» идейисем çуралнă. Çурчĕ икĕ хутлă.

Çак çуртрах Гете выртса тăнă кравать ларать. Ăна хыртан тунă. Кравачьпе юнашар тенĕ пекех – кресло. Кравачьпе кресло пирки мĕншĕн асăнатăп-ха эпĕ? 1832 çулхи мартăн 15-мĕш кунĕнче, уçăлма кайсан, Гете каретăра шăнса пăсăлать. Мартăн 20-мĕшĕнче вара аптăрасах ӳкет. Аслă сăвăç пăлханма тытăнать: кравать çинчен кресло çине, кресло çинчен кравать çине куçма тапратать. Вăл йынăшать, кăшкăра-кăшкара ярать. Тепĕр кунне Гете хăйне çăмăлтарах туять, июльти революци çинчен çырнă кĕнеке ыйтса илет. Анчах вăл ăна вуламасть, уçкаласа çеç хупать. Мартăн 22-мĕшĕнче вара, ирхине вунă сехет тĕлĕнче, эрех пама ыйтать. Оттилие хăй патне пыма чĕнет. Гете текех пĕр сăмах та чĕнмен. Вăл тăнран кайса выртнă, апла пулин те унăн шухăшĕ канăçсăррăн вылянă. Гете аллипе сывлăшра темĕн çырнă, çырнă... Унтан алли пĕвĕ çине ӳкнĕ. Çапла. Нимĕçсен аслă сăвăçĕ кресло çинче ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

П. Хусанкайпа тимлĕн итлесе çӳретпĕр эпир Гете çурчĕн пӳлĕмĕсем тăрăх. Чунра мăнаçлăх çуралать, çав хушăрах тунсăх та пусса илет.

– Совет Çарĕ вăхăтра ĕлкĕрмен пулсассăн, паян кун, Якур, санпа çак пӳлĕмсем тăрăх утса çуренĕ пулăттăмăр-ши! – те ыйтать, те шухăшлать Петр Петрович. – Совет салтакĕ аркатма мар, çĕнĕ пурнăç пуçлама çеç пулăшать, – шухăшне вĕçлет сăвăç çирĕппĕн.

Гете çуртĕнчен тухсанах – кафе. Гид пире унта илсе кĕрет. Кĕтесре – сĕтел. Çийĕ – шурă мрамортан. Ку сĕтел хушшинче тахçан Гете ларма юратнă иккен.

– Атя, Якур, эпир те ларса пăхар, – хаваслăн чĕнет мана П. Хусанкай. – Тен, ăс кĕмесен те пăсĕ хутшăнĕ!

– Кунта ларса тухнă хыççăн ăсĕ те, пăсĕ те пулĕ, – шӳтлетĕп эпĕ юлташа май.

– Çапла пултăрччĕ, çапла пултăрччĕ, шăллăм, – ман хулпуççи çине хурать аллине Петр Петровнч.

Пире гостиницăна вырнаçтараççĕ. Ăна 1746 çулта уçнă мĕн. Ку гостиницăра виçĕ çул хушши Лист пурăннă. Гостиница алăкĕ тăррине: «Сире турă сыхлатăр», тесе çырса хунă. Унтан та çӳлерех – хура упа кĕлеткине ӳкернĕ, малти тяппisemпе кăпăклă сăра курки тытнă хăй. Кăна курсассăн, П. Хусанкай:

– «Çак çурт управлă турăпа,

Ячĕ ун «Хура упа», – тесе рифмăласа хума та ĕлкĕрет. Пӳлĕме кĕрсе вырнаççассăн, эпĕ, курнисепе хавхаланса-пăлханса ӳкнĕскер, ниепле те лăпланма пултараймастăп.

– Петĕр пичче, – тетĕп эпĕ, хавхаланăва малалла тăсас тесе. (Çул çинче çӳренĕ е хамăр йышра кăна чух эпĕ ăна çапла чĕнеттĕм. Официаллă йĕркепе çеç Петр Петрович теттĕм.) - Мĕншĕн-ха эпир тепĕр чух Гетепе Шиллер пек туслă пурăнма пĕлместпĕр? Мĕн çитмест пире?

– Якур шăллăм, культура çитмест  пире,– турех тавăрса калать вăл мана. – Культура вăл чунра, юнра пулмалла. Туслă пурăнма – пысăк культура кирлĕ. Пĕр-пĕрин хăватне, ăсне пĕлнипе пĕрлех, ун  çитменлĕхĕсене те пĕл. Анчах çав çитменлĕхпе нихăçан та юлташна ан сăтăрла, унпа усă курма ан тăрăш.

– Пирĕн хăшпĕр чух туслăхпа та хăйне евĕрлĕ усă кураççĕ мар-и? – ун шухăшĕ май тăсатăп калаçăва.– Паян эсĕ пукан йышăнса ларатăн – вăл санпа туслă. Пукан çук-тăк – çав çын каллех пукан йышăнса ларакан еннелле сулăнать. Пур вĕт кун пек тĕслĕхсем?

– Тĕслĕхĕ пур. Анчах та ун пек çынсем туссем мар, вĕсем сĕмсĕрсем. Намăсĕ те çук вĕсен. Ĕçсе-çисе, калаçса-юрласа ларма та чун выртнă çын кирлĕ, – кăмăлне уçнăçем уçать Петр Петрович. – Акă, Митта Ваçлейне илер. Вăл – чăн-чăн тусчĕ. Аллăмĕш çулсен пуçламашĕнче вăл Çĕпĕртеччĕ-ха, Илпек Микулайĕ патне çыру ячĕ. Çав çырура вăл, Якур, санăн сăвву пирки те «ăслă та ятуллă Ефимов сăвви», тесе çырать, манăн очерка та ырăпа асăнать, Илпекĕн «Мунча» калавĕ айне «Чехов та алă пусма пултарать», тет. Йывăр чухне те Митта чун ăшшине, чун хăватне çухатман. Вăл литературăшăн çуннă. Илтнĕ-и эсĕ Митта кам пирки те пулсан шăл йĕрнине е кама та пулин хаярланине? Çук-и? Вăл хăйне шаннă. Пысăк сăвăç нихçан та çынна çимест, витлемест. Ун пек çын, сăвăç вĕтелсе каять. Пысăк сăвăç çеç таçта чунпа, пысăк хăватпа, туслăхпа пурăнать.– П. Хусанкай тутипе чăпăрт! тутарса илет. Унăн çапла йăла пурччĕ. Унтан пӳлĕм тăрăх утма тытăнать. – Тата пирĕн çав инкек те пур. Эпир пурте пĕрремĕш пуласшăн. Кашни – хăйне– гени. Анчах мĕнпе! Ун пирки шутламастпăр. Вăл хăй çырнине çеç курать. Ыттисем ним те мар. Анчах унăн хăйнеевĕрлĕхĕ те, хăйле çырни те çук. Унăн пырĕ çеç хăйĕн. Паллах, кăшкăрма, хаярланма. Критиксем те пирĕн вăйсăртарах пулас. Кашнин хăйевĕрлĕхĕ, стилĕ пирки калаçмастпăрпа пĕрех...

Чылай калаçрăмăр эпир ун чухне. Никам та чăрмантармасть. Вăл вăхăтра «эстрадная поэзия», «интеллектуальная поэзия» тесе шавлатчĕç.

– Мĕн шутлатăр эсир çавсем пирки? – ыйтатăп эп Петр Петровичран, унăн калаçас кăмăлĕ хĕрсе пынине сиссе.

– Мĕн шутлатăп-и! Вĕсем халь кăштах йуле кайнă, – каллех тутине чăпăрт! тутарса илет Петр Пегрович. – Эпир те çирĕммĕш çулсемпе вăтăрмĕш çулсем

пуçламăшĕнче хытă шавланă. Тем тĕрлĕ «измсем» те тупа-тупа кăларнă. Çавах та «измсенчен» реализм çеç тĕп вырăна юлчĕ. Халĕ хăшпĕрисем, пĕр чăваш критикĕ пек каласан, «хывăх нумай вĕçтереççĕ. Асăрланă-и? Атăл пăрĕ тапрансан, пĕтĕм çăмăл япала, çӳп-çап çиеле тапса тухать. Унтан, Атăл лăпланать, тасалать. Атăл мăнаçлăн юхма тытăнать. Пурте тасалĕ. Маншăн пĕр поэзи çеç, совет поэзийĕ, чун поэзийĕ, Маяковский пек каласан, поэтăн пĕтĕм янăравлă вăй-халне атакăлакан класа паратăп». Ку – манăн кредо. – П. Хусанкай, пӳлĕм тăрăх уткаласа çӳрерĕ. Унтан: – Атя, Якур, урама, аслă поэтăн сывлăшĕпе сывлар, – терĕ.

Эпир урама тухрăмăр. Çавах та калаçу пĕтмен-ха пирĕн.

– Петĕр пичче, эсир нумай курнă, нумай пĕлетĕр. Чăваш совет литературин сăпки умĕнче тăнă. Элкер, Шупуççынни, Патман, Золотов, Шăпчăк, Иван Мучи, Иван Ивник – пурте, пурте... пурне те курнă, пĕлетĕр... Çырăр-ха пĕрре тĕпĕ-йĕрĕпе. Вăл хăшпĕр шывлă романĕсенчен çĕр хут усăллăрах пулĕ, – тетĕп эпĕ.

– Э, Якур, ĕмĕтĕм пур. Сиктĕрмерен пуçласах çырасшăн-ха. Чăваш поэчĕсен хамăн кăмăла кайнă сăввисене вырăсла куçарса кĕнеке тăвас шут та пур. Унта Миттан «Вунтăваттă çапсан», Уйăпăн «Çурçĕр çăлтăрĕ», санăн «Клуб умĕнче», Ивникĕн, Эсхелĕн «Панулми», «Ятсăр юханшыв», Шупуççыннин «Чĕлĕм» тата ыттисен сăввисене пĕр çĕре пухас тетĕп. Ан тив,
вырăс вулаканĕсем чăваш лирикипе паллашчĕр.

Калаçа - калаçа, сисмен те – Шиллер çурчĕ умне пырса тухнă. Ăна сарă тĕспе сăрланă. Тăррине тимĕр витнĕ. Тимĕрĕ ешĕл тĕслĕ.

Çак мансардăллă çурта Шиллер хăй çĕре кĕрес умĕн виçĕ çул малтан, 1802 çулта, туяннă. Тулесе татас тесе, вăл парăма кĕрсе пĕтнĕ. Кунта вăл лăпкăн ĕçлеме пултарнă. Çак çуртра чаплă поэт хайĕн тлĕнмелле юлашки трагедийĕсене çырнă.

Шиллер пурăннă чухне, çуртăн аялти хутĕнче пулĕмĕсем пулнă. Иккĕмĕшĕнче – унăн килйышĕ, Шарлотта ятлă мăшăрĕпе ачисем пурăннă. Шиллер хăй вара, ĕçлеме никам та ан чăрмантартăр тесе, ĕç пӳлĕмне мансардăна куçарнă.

1847 çулта Веймар хули çак çурта туяннă та наци палăкĕ туса хунă.

Шиллерăн ĕç пӳлĕмĕ пысăк мар. Вăл кĕтесе çывăх ларать. Сулахай алăк енче авалхи глобус шанталпапа çурта лартнă. Чернил кĕленчи хачă выртать. Çак сĕтел çинче вăл «Мессинская невеста», «Вильгельм Телль», «Приветствие искусствам» произведенийĕсене çырнă.

Ĕç сĕтелĕ умне, хĕреслесе, икĕ шпага çакса янă. Кунтах камин, клавесина пур. Клавесина тĕлĕнче гитара çакăнса тăрать.

– Чи пахи çакă, – тет чылайран П. Хусанкай. – Гени сĕтелĕ çинче çырса пĕтереймен трагеди алçырăвĕ выртать. Çакăнта вăл литература хăвачĕ, литература пархатарĕ. Мĕн сывлăш тухиччен литература техĕмĕпе пурăнакан çын çеç,литература нушипе савнăçне куракан çеç, хăй ятне халăх умĕнче упраса хăварма пултарать. – П. Хусанкай кăштах шухăшласа тăрать. Чĕнмест. Унтан:– Çапла мар-и, Якур?– тесе ыйтать.

– Тĕрĕс те пулĕ, – хуравлатăп эпĕ ăна.

– «Пулĕ» мар, тĕрĕс тетĕп эпĕ, – çирĕппĕн каласа хурать вăл Шиллер ĕç сĕтелĕ умĕнче.

Чăнах та, Шиллер сĕтелĕ çинче «Дмитрий» трагедин алçырăвĕ выртать. Вăл ăна пысăк хавхаланупа çырма тытăннă, анчах çырса пĕтереймен. Марфа монологĕ тĕлĕнче татăлнă çав трагеди. Ара, Шиллерăн юлашки трагедийĕ вырăс историйĕпе çыхăннă. Халĕ çав алçыру умĕнче совет çыннисем, аслă вырăс çĕрĕн çыннисем, чăвашсем тăраççĕ. Ку туслăх символĕ пек туйăнса тăрать мана.

Тепĕр кунне пире Лист çуртне тата Гетепе Шиллер мавзолейне кăтартрĕç. Гете саркофагĕ – сылтăмра, Шиллерăн – сулахай енче. Саркофагсем çинче чечек кăшăлĕсем выртаçĕ.

– «Кур, Якур,
Вилсен те туслăх пур.
Мĕншĕн тесессĕн, Муза
Пулнă вĕсен тусĕ», – каласа та хурать П.Хусанкай. – Экспромчĕ чаплах мар пуль те, анчах икĕ гени умĕнче пуçра рифма çурални савăнтарать, – хушса хурать вара çавăнтах.

– Петĕр пичче, эсир ĕнтĕ рифмăсăр пурăнаймастăр пулĕ? Вăл сирĕн чунра, юнра, – тетĕп  эпĕ çумри юлташăма.

– Чунра, юнра çеç пулни сахал мар-ши? Вăл пурнăç пулса тăтăр. Çак икĕ улăп литературăсăр пурăнайман ав. Вăл вĕсемшĕн сывлăш, çутçанталăк, хĕвел, çумăр, тăвăл, тырпул, юрату, кĕвĕçӳ, куççуль, савăнăç пулнă. Ахальтен-и Шиллер «Ода к радости» çырнă? – хĕрсе каять поэт. Вăл Гетепе Шиллер пултарулăхне тĕплĕ пĕлет мар-и?

...Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пире Бухенвальда илсе кайрĕç. Бухенвальда пĕлмен çын çук та пулĕ? «Бухенвальдский набат» юрра та кашни тенĕ пекех юрлать. Çак илемлĕ вырăнта, сăрт тăррине, фашистсем вилĕм лагерĕ туса

лартнӑ. Вилӗм баракӗсене ҫӗрпе танлаштарнӑ ӗнтӗ. Кунта халӗ – музей. Фашистсен тискерлӗхне курма та йывӑр.

Бухенвальдраа Тельман камери те пур. Стена ҫинче асӑну хӑми ҫакнӑ. Ун умӗнче–чечексем, вилӗмсӗрлӗх ҫулӑмӗ ялкӑшса ҫунать.

Кунта эпӗ «Чӗрӗ» ятлӑ сӑвӑ ҫыртӑм. Ӑна пӗрре ларсах ҫырнӑ. Чун тарӑхӑвӗ пулӑшрӗ пулмалла.

Ту айлӑмне чул палӑксем лартнӑ. Вӗсем ҫине Европӑри патшалӑхсен ячӗсене ҫырнӑ. Ҫав кашни палӑк тӑррине шанталсем лартнӑ, вӗсем ӗмӗрлӗх ҫулӑмӗ ялкӑштараҫҫӗ. Ара, Бухенвальдра ҫав патшалӑх ҫыннисем асапланнӑ. Вӗсене крематорире ҫунтарнӑ, вӗсемпе этемле мар опытсем тунӑ.

Эпир, совет писателӗсем, СССР тесе ҫырнӑ чул палӑк умне чечек кӑшӑлӗ хутӑмӑр.

Бухенвальд таврашӗнчен йӗри-тавралӑх питӗ хитре курӑнать. Кунтан 8 ҫухрӑмрах – Веймар. Вӑл – йывӑҫсем айӗнче. Хӗрлӗ черепица е тимӗр витнӗ ҫуртсен тӑррисем курӑнаҫҫӗ. Улӑх-ҫаран, ялсем...

Ҫак илеме курса асаплантӑр ҫын, тенӗ пулӗ ҫав фашистсем. Шутласан, тӗлӗнмелле. Вӗсем Гетепе Шиллер умнех туса лартнӑ вӗт вилӗм лагерьне. «Суратпӑр сирӗн ҫине», темен-ши фашистсем? Ҫавӑнтах Гитлер вӗсен кӗнекисене вутра ҫунтарнӑ.

Пирӗн гид-тӑлмачӑ, ту тӑррине каялла хӑпарсан:

– Гете ҫак вырӑнта тӑма юратнӑ, – терӗ.– Кунта эпӗ хама кайӑк пек ирӗклӗ туятӑп, тенӗ пулать Гете.

– Вӑл туйнӑ пуль, – тет П. Хусанкай. – Анчах  фашистсем ирӗке  таптанӑ. Гетен тӗнче умӗнчи чысӗ ҫинчен аса та илмен, – сӑвӑҫ куҫӗсенче совет салтакӗн тарӑхӑвӗ курӑнать. Хӑй пӑлханӑвне тытса чарать вӑл. Тарӑхнине ирттерсе ярас тесех пулас: – Калӑр-ха, чанах-и, Гете ҫак ту тӑррисенчен пӗринче, вӑрманта, «Ту тӑррисем» ятлӑ сӑвӑ ҫырнӑ теҫҫӗ!

– Ҫапла, – хуравлать ӑна гид-тӑлмачӑ. – Анчах та вӑл сӑвӑ «Ту тӑррисем» ятлӑ мар. Ӑна сирӗн Лермонтов ҫапла  ят панӑ. Гете сӑвви «Ҫулҫӳревҫӗн каҫхи юрри» ятлӑ. Ӑна вӑл Ильменау таврашӗнчи лесник ҫурчӗн стени ҫине ҫырса хӑварнӑ.

– Вуласа парӑр-ха! Гете сӑввин музӑкне итлер, – ыйтать унран Петр Петрович.

Гид-тӑлмачӑ хаваспах килӗшет. Вӑл нимӗҫле вуласа парать.

– Хăйне евĕр янăрать. Эсир пире дословник туса парăр-ха, тен, эпир чăвашла куçарăпăр ку сăвва, Гете евĕрлĕрех пултăр вăл, – çавăнтах гидран туслăн ыйтать Хусанкай.

– Веймара çитсенех туса парăп, – килĕшет гид-тăлмачă.

– Çынсем халĕ те тĕлĕнсе те ĕненсе каласа параççĕ, – лăпланаймасть хĕрсе кайнă гид, – çав лесник çуртне Гете, вилес умĕн çур çул малтан, 51 çул иртсен, пырса кайнă теççĕ. Çав сăввăн юлашкн йĕркисене куççулĕ витĕр каланă теççĕ.

П. Хусанкай ку сăвва чăвашла куçарса ĕлкĕреймерĕ курăнать. Эпĕ вара, Гете çуралнăранпа 225 çул тултарнă тĕле, куçартăм.

Веймар, чăнласах та, пысăк культура центрĕ. Ун çинчен вĕçĕмсĕр çырса кăтартма пулать. Анчах та автобус пире васкасах Лейпциг еннелле илсе каять.

– Тепре тĕл пуличчен, классиксен хули Веймар! – автобус уçă кантăкĕнче алă сулать Петр Петрович Хусанкай.

Лейпциг. Кĕнекесем пичетлесе тĕнче умĕнче чапа тухнă ку хула. Лейпцигра В. И. Ленин «Искра» хаçатăн пĕрремĕш номерне кăларнă. (Ун çинчен эпĕ «Ялав» журналта статья çырнăччĕ. Çавăнпа халĕ чарăнса тăмастăп.) Кунта Г. Димитров Геринг каппайчăк фашистпа куçа-куçăн тăнă. Фашистсем коммуниста суд тăвасшăн тăрăшнă, анчах та Г. Димитров чăнлăх сăмахĕпе фашизма суд тунă, хăйĕн сăмахĕпе вĕсене ĕмĕрлĕхех пăталанă. Г. Димитров музейĕнче эпир вăл Герингпа судра тавлашнине итлерĕмĕр. Коммунист сасси çирĕп, Геринг арлан пек хăрлатать. Кунта Димитров портречĕ пур, – ун умĕнче чечек кăшăлĕ.

Вальтер Ульбрихт çуралнă çурта çитсе куртăмăр, Рихард Вагнер пурăннă çурта пуç тайрăмăр.

Каçхине пăлхарсен Лейпцигри клубĕнче апатлантăмăр. Алăкĕ тăррине «Отель «София» тесе çырса çапнă. Кунта И. Вазов, Христо Смиркенский, Т. Живков кĕнекисем пур. Вĕсене нимĕçле куçарса кăларнă.

Апат çисе зала тухсан, П. Хусанкай патне пăлхар хĕрачи пырса тăчĕ.

– Здравствуйте, Хузангай! – терĕ вăл вырăсла.

Петр Петрович ăна пăлхарла ответ пачĕ. Икĕ палхар тĕл пулнă тейĕн çав: шăнкăртаттарса кăна калаçаççĕ. Эпĕ пуррине курса, вĕсем чылайран тин вырăсла калаçма тытăнчĕç. Вĕсем Софийăра паллашнă иккен. Ку хĕрача Лейпцига кĕнеке пичетлес ĕç квалификацине ӳстерме килнĕ. Эпир А. Тодорова, В. Йосифова, Н. Марангозоза аса илтĕмĕр. Ара, эпир вĕсемпе тă-ван Шупашкарта пĕр сĕтел хушшинче хăналанман-и? Лейпцигпа Шупашкар питĕ çывăх пек, пăлхар тусăмсем те юнашар пекех туйăнса кайрĕç.

Лейпциг ерменккине те кĕрсе куртăмăр. Унта эрне çӳресен те курса-тĕлĕнсе пĕтерме çук пулĕ.

Тепĕр кунне пире Лейпцигри «Халăхсен кĕрешĕвĕ» ятлă палăк патне илсе кайрĕç. 1813 çулхи октябрь уйăхĕнче, Лейпциг çывăхĕнче, Европа кунçулне, шăпине татса панă. Кунта Наполеон çарне çапса аркатнă. Палăк çӳллĕшĕ – 91 метр, ку тулаш енчен, ăшĕнчи çуллĕшĕ вара – 68 метр. Тулаш тата шал енчи палăк пайĕсене гранитопорфиртан тунă. Гранитопорфирне Лейпциг çывăхĕнчи Бойх ялĕнче кăларнă. Пĕтĕмĕшпе кунта 26500 якатнă чул илсе килнĕ. Палăкăн пĕтĕмĕшле виçи 3 мĕльюн центнера яхăн.

Лейпциг патĕнче Наполеона хирĕç пынă кĕрешӳре вырăссен 22 пин, пруссен 16 пин, Австрин 12 пин, шведсен 300 салтакĕ пуç хунă. 1913 çулта халăхсен кĕрешĕвĕнче пуç хунă вырăс салтакĕсене чысласа Храм-палăк туса лартнă. Храм-палăкăн часовня-склепĕнче 4 тупăк пур. Унта – вырăс салтакĕсемпе офицерĕсен учĕсемпе шăмми-шаккнсем,

Халăхсен кĕрешĕвĕн палăкĕн тăррине çитме 500 картлашкапа хăпармалла. П. Хусанкай ури ыратнннне пăхмасăрах хăпарчĕ. Хăпарса çитсен поэт:

«Çын тени – кашни пĕрре,
Тек никам сая ан кай.
– Варçă пĕттĕр ĕмĕре! –
Тетĕп эпĕ, Хусанкай», – тесе сăвăларĕ.

Аяла ансассăн, çак сăвва хисеплĕ хăнасен кĕнекине çырса хăварчĕ.

Чăнах та, П. Хусанкай сăвăсăр пурăнайман. Кирек ăçта та, кирек хăш самантра та сăвă хатĕрччĕ унăн. Литературăпа сăвăç кăвапи уйăрăлми çыхăннă тесен пĕрре те йăнăш пулмасть. Вăл ятарласа литература валли çуралнă.

Петĕр Хусанкай урлă кампа кăна паллашман, тăванлашман пулĕ эпир! Пăлхарĕ, венгрĕ, чехĕ, словакĕ, нимĕçĕ, французĕ... Хамăр çĕршыври халăхсен сăвăçĕсене калама та кирлĕ мар пулĕ. Николас Гильен, Луи Арагон, А. Тодоров, Елизавета Багряну...

П. Хусанкай – чăваш литературин чысĕ, мухтавĕ. Унпа пĕр вăхăтра пурăннăшăн савăнмалла çеç пирĕн. Унпа пĕрле çулçӳреве тухма та пысăк чыс. Çавăнпах пулĕ эпĕ Веймарта:

Хусанкайпа çул çӳреме аван.
Санпа вăл сăвăç, юрăç та тăван:
Ят-сумлăскер – санпа пĕр тан тытать,

Чун çуннă чух – шӳтлет те пусарать.
Çуралнă пуль вăл çул çынни пулма,
Хăй ăшшипе çынна çунат хушма… –

тесе сăвă хайларăм. Эпĕ ăна çавăнтах вуласа патăм. Вăл:

– Ытла пысăк чыс мар-и? – тесе ыйтрĕ манран, ăшшăн пăхса. – Э, тепĕр тесен, чун сăмахне халăх умне кăларма мĕншĕн именмелле? – те мана, те хăйне ыйту пачĕ. Çапла калани: «Пичетлеме юрать», – тенĕнех туйăнчĕ.

Лейпцигран пирĕн çул Чехословакие выртрĕ. Акă, пирĕн автобус икĕ çĕршыв чиккине çитрĕ. Пирĕн паспортсене тĕрĕслерĕç. Эпир Чехословаки çĕрĕ çине кĕретпĕр. П. Хусанкай кунта иккĕмĕш хут ĕнтĕ. Çавăнпа та вăл маншăн гид та, тăлмачă та.

Умра – Хебб хули. Хебб хули Европăн географиллĕ центрĕ иккен. П. Хусанкай каллех сăвăлать.

Тепĕр çĕре вĕçсе çитеймĕ кайăк.
Чăваш ачи – тĕнче уçлăхĕнче.
Якур, пĕрле ларса шутлар-ха лайăх:
Эпир санпа Европа варринче.

Вĕçтерет автобус малалла. Чехословаки хули-ялĕ. Анчах кунта çӳренисем пирки урăх калаçу. Тепĕр чухне валли хăварам.

Çак асаилĕве çырнă чухне эпĕ П. Хусанкай мана автографпа панă кĕнекисене пăхса лартăм. «Стихи» ятлă кĕнеке çине çапла çырнă вăл:

Георги Ефимов, Якур!
Пирте – Чăвашра – тĕрли пур,
Эп хам та пĕри тĕрлинчен.
Пурнар-ха... çĕре кĕриччен!

*П. Хусанкай. 6.IV.63.*

Кунта эпĕ çӳлерех асăннине аса илтĕм. «Эсĕ – Якур, эпĕ – Петĕр, тепри – Çитăр»... «Эп хам та пĕин тĕрлинчен». Çапла. Тĕрлĕ сасă хушшинче унăн сасси яр уççăн илтĕнсе тăрать. Ку – Хусанкай сасси. Ăна никампа та, нимĕнпе те хутăштарса яма çук. Вăл – чăваш поэзийĕн, чăваш халăхĕн сасси. Апла вăл ĕмĕрлĕхех!

1976